Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

91 (8157) № ✻ Юн кун, 2013 çулхи раштав (декабрь) уйăхĕн 4-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

**Канашлу**

## Кулленхи ыйтусемпе

***Декабрĕн 2-мĕшĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе, федераци ведомствисен территори органĕсен тата муниципалитетсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ.***

М. Игнатьев канашлура сӳтсе явма палăртнă ыйтусем çине куçиччен чи малтанах Раççей Федерацийĕн мĕн пур субъекчĕ хушшинче Раççей Хĕç-пăшаллă Вăйĕсен çар управленийĕн органĕсем çар учетне йĕркелессипе ирттерекен смотр-конкурсра Чăваш Ен пĕрремĕш вырăн йышăннă ырă хыпара пĕлтернĕ. Республика Пуçлăхĕ муниципалитетсен ертӳçисене Раççей Президенчĕ лартнă тĕллевсене туллин пурнăçласа тухăçлă ĕçлесе пынăшăн тав тунă.

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ Алла Самойлова инвалидсене, уйрăм категорисенчи ветерансене реабилитаци хатĕрĕсемпе тивĕçтерессипе çинче чарăнса тăнă.

2013 çулта нумай хваттерлĕ çуртсене тĕпрен юсаса çĕнетессин ятарлă программипе йĕркелесе ирттернĕ ĕçсем çинчен республика строительство министрĕн ĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Александр Герасимов каласа кăтартнă.

Канашлура федераци тата республика шайĕнчи çулсен пахалăхĕн ыйтăвĕсене те пăхса тухнă.

Чăваш Республикин культура министрĕ Вадим Ефимов Пĕтĕм тĕнчери XXIII опера фестивалĕн пĕтĕмлетӳ концерчĕ çинче чарăнса тăнă. Асăннă мероприяти Шупашкарта ноябрĕн 22-мĕшĕнчен тытăнса 30-мĕшĕччен пынă.

**Ĕçре пултаруллисем**

## Килекенсем кăмăллă



***Сăн ӳкерчĕкре эсир Мăн Сĕнтĕрти информаципе культура центрĕнчи библиотека заведующине Татьяна Ефимовăна куратăр. Информаципе культура центрне капиталлă юсав ĕçĕсем туса ирттернĕ хыççăн кăçалхи июль уйăхĕн пуçламăшĕнче ĕçе кĕртнĕ.***

***Хальхи вăхăтра çынсен ыйтăвĕсене туллинрех тивĕçтерес тĕллевпе районти 15 библиотекăра нумай функциллĕ центрăн «пĕр чӳрече» мелĕпе ĕçлекен офисĕсене уçнă. Вĕсенчен çак мелпе пĕрремĕшĕсенчен пĕри Мăн Сĕнтĕрти информаципе культура центрĕнче ĕçлеме пуçăннă. Унăн ĕçне те Татьяна Аверкиевна йĕркелесе пырать. Кунта килекенсем Татьяна Ефимова ĕçĕпе кăмăллă.***

**В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Республикăра**

## Ял хуçалăхне – пулăшу

Иртнĕ кунсенче республикăна федераллă бюджетран ял хуçалăх предприятийĕсене пулăшма 93,1 миллион тенкĕ укçа килсе çитнĕ. Çав шутра:

– ӳсен-тăран отраслĕнчи регион пĕлтерĕшлĕ экономика программисене аталантарма – 20,9 миллион тенкĕ;

– ӳсен-тăран отраслĕне тата продукци тирпейлессине тата инфраструктурăна аталантарма илнĕ инвестици кредичĕсен процент ставкисене саплаштарма – 36,4 миллион тенкĕ;

– выльăх-чĕрлĕх отраслне тата продукци тирпейлессине тата инфраструктурăна аталантарма илнĕ инвестици кредичĕсен процент ставкисене саплаштарма – 35,8 миллион тенкĕ.

Çулталăк пуçланнăранпа Чăваш Республикин агропромышленность комплексне пулăшма федераллă бюджетран пĕтĕмпе 1404,3 миллион тенкĕ килнĕ.

**ЧР Ял хуçалăх министерстви.**

## Çĕнĕ çула – Олимп çулăмĕпе

Республика тĕп хулине Шупашкара «Сочи – 2014» Олимп çулăмĕн кортежĕ декабрĕн 27-мĕшĕнче Ульяновск енчен çитет. Кăнтăрла çулăм лампадинчен факел çĕклесе пыракан хăйĕн çулăмне чĕртет те Шупашкар тăрăх çула тухать. Эстафета трасси 33 километрпа тăнлашать. Çул çинче факел çĕклесе пыракансем 163-ĕн пулаççĕ. Кашнинех вăтамран 200 метр чупма тивет.

Çулăм лампади Шупашкарта çĕр каçать, тепĕр кун ирхине эстафета караванĕ Йошкар-Ола енне çул тытать.

## Аккредитаци ăнăçлă иртнĕ

Чăваш Ен Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерствин удостоверени центрĕ (УЦ) Раççей Çыхăну министерствинче ăнăçлă аккредитациленнĕ. Ун пирки хушăва ноябрĕн 20-мĕшĕнче ведомство ертӳçи Николай Никифоров алă пуснă. Аккредитаци çавна çирĕплетет. Чăваш Ен Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерствин удостоверени центрĕ федерацин 63-ФЗ № «Об электронной подписи» саккунĕн требованийĕсене тивĕçтерет, вăйлатнă майпа электрон мелĕпе квалификациллĕ алă пуснине (КЭП) пама пултарать. КЭП алă пуснă çынна палăртма тата документа улшăнусем кĕртессинчен хӳтĕленме май парать.

Аса илтеретпĕр. Центр йĕркеленĕренпе çичĕ çул хушшинче электрон цифра мелĕпе алă пусмалли уçăсене 10150 панă, реестрта унпа усă куракансене 5150 регистрациленĕ. Федераци саккунĕпе килĕшӳллĕн унччен панă уçăсемпе вĕсен вăхăчĕ тухиччен, анчах та 2013 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕччен усă курма май пур.

## Патшалăх контракчĕ тунă

Чăваш Ен Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерстви электрон правительствин регион инфраструктурипе усă курса сервис услугисемпе тивĕçтерессипе акционерсен «Ростелеком» уçă обществипе патшалăх контракчĕ тунă. Контракт условийĕсемпе килĕшӳллĕн компани 2013 çул вĕçлениччен электрон правительствин регион инфраструктурин никĕсĕ çинче ведомствăсем хушшинчи электрон хутшăнăвĕн регион тата федераци системисене пĕрлештерет, информацин хăрушсăрлăх шайĕпе тивĕçтерет, сервис тата техника пулăшăвĕ парать.

Çавна палăртса хăварас пулать. «Электрон правительствине» аталантарассинче Раççейре те, Чăваш Енре те икĕ тĕп проект тухса тăрать. Кусем вĕсем патшалăх (муниципалитет) услугисене электрон мелĕ çине куçарасси тата влаç, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем ведомствăсем хушшинчи электрон хутшăнăвĕн мелĕпе ĕçлеме пуçăнасси. Паян граждансен тĕрлĕ справкăсем пуçтарса черетре тăма е кабинетсем тăрăх çӳреме кирлĕ мар. Кирлĕ справкăсене патшалăх служащийĕсем СМЭВпа усă курса хăйсем пуçтарма тивĕç.

**Чăваш Ен Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерстви.**

**Районта**

## Çынсене йышăннă

Пĕтĕм Раççейри «Единая Россия» парти йĕркеленнĕренпе декабрĕн 1-мĕшĕнче 12 çул çитрĕ. Партин вырăнти уйрăмĕнче пирĕн районти 1253 çын тăрать.

Партин çуралнă кунĕнче кашни уйрăмрах граждансене йышăннă.

Партин Муркашри вырăнти уйрăмĕн обществăлла йышăну пӳлĕмĕнче çак кун вырăнти уйрăмăн секретарĕ – район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев тата район пуçлăхĕ – депутатсен районти Пухăвĕн председателĕ И. Николаев çынсене йышăнчĕç. Граждансем ытларах çĕрпе, пенсипе тата пурăнмалли условисене лайăхлатассипе çыхăннă ыйтусемпе кăсăкланнă. Ыйтусенчен нумайăшне йышăну вăхăтĕнчех татса панă, хăшĕ-пĕрисене контроле илнĕ.

## Юн парса пулăшасси – пархатарлă

Чăваш Енри сиплевпе профилактика учрежденийĕсене кулленех юн компоненчĕсем кирлĕ. Çавна май кашни районтах Донор кунĕсем ирттерĕççĕ. Пирĕн районта çак кунсене декабрĕн 5–27-мĕшĕсенче йĕркелеме палăртнă.

Донорсене юн панă кун 329 тенкĕ компенсаци парассине пăхса хунă. Кунсăр пуçне вĕсене гемотрансмиссив инфекцийĕсем тĕлĕшпе тĕрĕслеççĕ. РФ Ĕç кодексĕпе килĕшӳллĕн юн паракана çав кун ĕçрен хăтарма ирĕк паракан справкăпа тивĕçтереççĕ. Вăл ĕçлекене вăтам ĕç укçине тӳлеме тата çулсерен канакан отпуск çумне е юн панăранпа çулталăк хушши урăх вăхăтра 1 кун канма ирĕк парать.

Донорсен кашнинех хăйĕнпе пĕрле паспорт пулмалла.

Районта иртекен Донор кунĕсен йĕрки çапла: **декабрĕн 5-мĕшĕ** – Йӳçкасси ялĕнче 50 çын йышăнма планланă; **декабрĕн 17-мĕшĕ** – Нискасси ялĕнче 50 çын йышăнма планланă; **декабрĕн 18-мĕшĕ** – Турайра 50 çын йышăнма планланă; **декабрĕн 19-мĕшĕ** – Москакассинче 50 çын йышăнма планланă; **декабрĕн 23-мĕшĕ** – Шетмĕпуçĕнче 50 çын йышăнма планланă; **декабрĕн 24-мĕшĕ** – Ярапайкассинче 50 çын йышăнма планланă; **декабрĕн 25-мĕшĕ** – Мăн Сĕнтĕрте 50 çын йышăнма планланă; **декабрĕн 26-мĕшĕ** – Муркашра 100 çын йышăнма планланă; **декабрĕн 27-мĕшĕ** – Юнкăра 50 çын йышăнма планланă.

## Халăх театрне – 95 çул

Раштав уйăхĕн 7-мĕшĕнче Орининти халăх театрĕ 95 çул тултарать. Çак тапхăрти аталанура театр пысăк утăмсем тунă, ял культурине çĕнĕ шая çĕклессишĕн ырми-канми ĕçленĕ.

Кунти пĕрремĕш спектакльпе ялти учительсемпе çамрăксем халăх умне 1918 çулта тухнă. Ăна валли вĕсем ялти пуçламăш шкулта сцена хатĕрленĕ. Унта ялти артистсем А. Пушкинăн «Корчма на Литовской границе» трагедири сценăна лартса панă. Ялти çак ырă пуçарăвăн никĕслевçи вăл вăхăтра Чикмери садпа пахча училищинче вĕреннĕ Михаил Моисеев пулнă.

1956 çулта Ординтинти драма коллективне «халăх театрĕ» ят параççĕ. Палăртмалла, пирĕн ентешсем ялти драма коллективĕсем хушшинче халăх театрĕ ята республикăра та пĕрремĕш тивĕçнĕ.

Асăннă коллектив лартнă «Кушар» тата «Ялта» пьесăсене К. Иванов ячĕллĕ Чăваш академи драма театрĕн тата Вырăс драма театрĕн сценисем çинче те кăтартнă.

## Фермăри хĕл кунĕсем

Районта пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенчи обществăлла выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарассипе вырăнсенче ĕçсем епле пынипе паллашма ирттерекен тĕрĕслевсем район администрацийĕн кун йĕркинчен тухмаççĕ. Çак тĕллевпе зооветспециалистсенчен тăракан ушкăнсем вăхăтран вăхăта пĕрлешӳллĕ тата хресчен (фермер) хуçалăхĕсен кашни ферминех çитсе курма тăрăшаççĕ.

Обществăлла выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарасси епле пынипе интересленсе иртнĕ эрнере район администрацийĕн ĕçченĕсем икĕ ушкăнпа хуçалăхсене çитсе курчĕç. Ĕçлĕ çул çӳревре специалистсем хĕл тапхăрĕн иккĕмĕш уйăхĕ епле иртнипе паллашрĕç. Хуçалăхсенче аш-какай туса илесси иртнĕ çулхи çак вăхăтри шайрах пулсан, сĕт сăвасси пĕтĕмĕшле 116,8 процентпа танлашнă.

Тĕрĕслевсен пĕтĕмлетĕвĕпе хаçатăн çитес номерĕсенче тĕплĕнрех паллаштарăпăр.

**Н. НИКОЛАЕВА, А. БЕЛОВ хатĕрленĕ.**

**Çырăнтару – 2014**

## Çак кунсенче çырăнăр!

**«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2014 çулхи январьтен илсе тăма малалла çырăнтараççĕ. Вăхăт нумаях юлмасть.**

**Хаçата 6 уйăха çырăнмалли хак – 216 тенкĕ те 30 пус.**

**Хаклă вулаканăм! Малашне те пĕрле пулар!**

# Ача амăшĕсене – пулăшу

**Пенси фондĕнчен**

Ача амăшĕн кунĕнче кашни çемьерех амăшĕсем тĕлĕшпе салам тата тав сăмахĕсем пулчĕç ĕнтĕ. Патшалăх та ача амăшĕсене тĕрлĕ енлĕ пулăшу мелĕсемпе тивĕçтерме тăрăшать.

Акă Муркаш районĕнче икĕ е ытларах ачаллă 1477 çемье, Чăваш Республикинче вара 48 пин çемье ача амăшĕн капиталĕн сертификачĕсене илнĕ. Вĕсенчен районĕпе 691 çемье, республикипе 25 пин çемье сертификатпа усă курса хăйсен пурнăç условийĕсене лайăхлатнă. Районти 34 çемье ача амăшĕн капиталĕпе хăйсен аслă ачисем аслă вĕренӳ заведенийĕсенче вĕреннĕшĕн е ачисене садика çӳретнĕшĕн тӳлеме усă курнă. Республикипе кун пек çемьсем 800 пулнă. Ку тĕлĕшпе федераци шайĕнчен патшалăх пулăшăвĕ районĕпе 229 миллион тенкĕпе, республикипе 8,6 млрд. тенкĕпе танлашнă.

Пенси законодательствинче Çурçĕр регионĕсенче ĕçленĕ нумай ачаллă амăшĕсем валли 50 çулта пенсие тухассине пăхса хунă. Муркаш районĕнче çапла майпа вăхăт çитмесĕрех пенсие тивĕçнисем 900 çын. Вĕсем пурте 8 çула çитиччен 5 е ытларах ача пăхса ӳстернĕ. 50 çултах Çурçĕр регионĕсенче календарлă 12 çул ĕçленĕ е унпа танлаштарнă вырăнта 17 календарлă çул ĕçленĕ 3 амăшĕ те пенсие 50 çулта тухнă.

Ачана çулталăк çурăна çитиччен пăхса пурăнма паракан тапхăр 3 çулхи ĕç стажне кĕрет, çав вăхăтра ача амăшĕн пенси счечĕ çине патшалăх страхланă çулталăкри взноссене куçарать. Пенси системине çĕнетсе улăштарассин проекчĕсенче ача пăхса пурăнмалли тапхăра 4,5 çулталăка çитерме, çавăн пекех иккĕмĕш е виççĕмĕш ача çуратнăшăн пенси çумне ӳстермелли коэффициента палăртма шутлаççĕ.

**Пенси фончĕн районти управленийĕ.**

**Район 70 çул тултарнă май**

# Вăл юрă-кĕвĕпе телейлĕ



Районта ятлă-сумлă çынсем сахал мар, пĕри ял хуçалăх ĕçĕнче пуçаруллă, тепри сывлăх сыхлавĕнче ырми-канми тăрăшать, виççĕмĕшĕ – юрă-кĕвĕ ăсти. Чунпа пурнăçланă кашни ĕç вара сăваплă та пархатарлă.

Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченне, Чăваш Енри композиторсен ассоциацийĕн членне, Мăн Сĕнтĕрти информаципе культура центрĕ çумĕнчи «Янаш» халăх юрăпа ташă ансамблĕн пултарулăх ертӳçине Родион Петрова пĕлмен çын çук та пулĕ. Вăл хăй кун-çулне юрă-кĕвĕпе тачă çыхăнтарнă.

– Эпĕ хам ĕçĕмпе питĕ телейлĕ, тăрăшни вара куç умĕнче, – калаçăва пуçарчĕ вăл.

...1957-мĕш çулхи июнĕн 23-мĕшĕ. Кун таврăнас тапхăр ĕнтĕ, кайăксен вĕççĕр-хĕрсĕр илемлĕ те хавас кĕвви иксĕлмен-ха. Канăça çухатнă Петр Петрович мăшăр çунат хушнă тейĕн, ăна мăшăрĕ Нина Ивановна ывăл парнеленĕ. Чунра вара çав тери савăк. Çемье пуçĕ юрă-кĕвĕ ăсти пулнăран-ши, хавас çемĕ кăларса унталла-кунталла вăр-вар уткалать, алла хут купăс тытмасăр чăтаймарĕ вăл. Тен çак самант ашшĕнчен ĕмĕрлĕх парне е пил пулнă пулĕ. Ашшĕ-амăшĕ пĕчĕкскерне Родион ят хунă. Çапла вара Вăрнар районĕнчи Авăрçырма ялĕнче пулас хут купăсçă ӳссе аталаннă.

– Пире мĕн ачаллах ĕç çумне çыпăçтарнă. Атте-анне тĕрĕс воспитани парса ӳстернĕ, лайăххипе усаллине уйăрма вĕрентнĕ, – аса илет Родион Петрович иртнĕ кунсене.

Ашшĕ сутуçăра вăй хунă, амăшĕ вара колхоз ферминче чылай çул тимленĕ. Çавăнпа та кил-тĕрĕшре Родионпа Виталий ывăлĕсем тата Вальăпа Галя хĕрĕсем сахал мар ĕçленĕ. Петр Петрович ăста купăсçă пулнипе ĕçрен пушансан, çемье пĕрле пухăнсан тăтăшах илемлĕ кĕвĕ шăрантарнă. Ачасен те çакă çăмăллăн пулнă.

Родион шкулта вĕреннĕ чухне учительсен ачасене концерт, шӳт, тĕрлĕ сценка лартма хатĕрлесси пысăк йывăрлăх пулман. Пуçаруллă арçын ача яланах хастарлăхпа палăрнă, ыттисене те самантрах хавхалантарнă. Хăй тăтăшах пысăк сцена, ăста юрăçсем тата музыкăн тĕрлĕ инструменчĕ пирки ĕмĕтленнĕ. Унăн шухăш-кăмăлне ыттисем те ырланă. 1973 çулта 8 класс вĕренсе пĕтернĕ Родион ку ĕмĕте ытла кая хăвармасăр вăрăм çула тухнă. Шалти туйăм-туртăм ăна Çĕрпӳри культура училищине илсе çитернĕ. Тинех вăл кăмăлланă лару-тăру – йĕри-тавра юрă-кĕвĕ тĕнчи. Ял каччи кунта хăйне питĕ меллĕ туйнă. Кашни конкурса, концерта хутшăннă, обществăлла ĕçре активлăхпа палăрнă. Пысăк опытлă ĕçченсемпе калаçма, вĕсенчен ытларах вĕренме тăрăшнă. Родион Петров баянпа, балалайкăпа, домрăпа тата ытти инструментпа çăмăллăнах усă курма хăнăхнă. Пысăк сцена унран инçех те маррине чунĕпе туйнă-ха çамрăк. Çапла вара 1976 çулта «Халăх инструменчĕсен оркестрĕ тата клуб ĕçченĕ» специальноçа алла илсе тухнă вăл. Анчах та ăна малта арçын тивĕçне пурнăçлас ĕç кĕтнĕ. Хăй суйлавĕнчен вăл кунта та уйрăлман.

Çул хыççăн çул каять, маттур каччăна тăван тăрăх хапăл тăвать. Малтанласа хăй пултарулăхне Родион Петрович Вăрнар районĕнче тĕрĕслесе пăхать. Ăста алăра вара тĕрлĕ инструмента чун кĕрет. Тăрăшуллă ĕçчен пысăк çитĕнӳсем патне ăнтăлма тăрăшать.

Умра – шурă Шупашкар. Çамрăк купăсçă пысăк сцена тата паллă юрăçсем пирки ĕмĕтленетчĕ, тинех шухăш пурнăçа кĕрет пулас. Çапла вара вăл Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамблĕн баянисчĕ тата концертмейстерĕ пулса тăрать.

– Малтанах шикленмелле пек туйăнатчĕ, йăлтах паллă та пултаруллă ĕçченсем вĕт, манăн хама тивĕçлĕ шайра кăтартмалла, концерт вара пысăк пахалăхпа иртмелле, – аса илет Родион Петрович иртнĕ çулсене.

Вун пилĕк çула яхăн ĕçлет вăл кунта, ăсталăха туптать. Ялти пурнăç вара хăйне майлă пырать, чылай чухне ятарлă пĕлӳллĕ çынсем çитмеççĕ унта. Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнче те çавăн йышши чăрмав пулни сисĕннĕ. Пултаруллă специалиста кунта ĕçлеме килме ыйтса илеççĕ. Çапла вара вăл «Янаш» халăх юрăпа ташă ансамблĕн пултарулăх ертӳçинче вăй хума пуçлать. Тĕрлĕ концерт программипе Венгринче икĕ хут пулнă, çавăн пекех Финляндинче, Швецинче тата ытти çĕре чылай тухнă. Вĕсем хутшăннă фестиваль, конкурс хисепне шутласа кăларма та йывăр.

– Эпĕ ансамбльпе тачă çыхăну тытакан П. Воробьева, В. Егорова, Л. Самушкова, Л. Ильгечкина, Р. Николаевăна, Л. Мироваевăна, В. Самушковăна, Л. Щегловăна, А. Егоровăна, А. Ивановăна пысăк тав сăмахĕ калатăп. Çавăн пекех В. Яковлев балетмейстера, А. Иванов баяниста ырăпа асăнмалла, ыттисем те маттур, – ăшшăн каласа парать Родион Петрович хăй ĕçĕ пирки.

Тăрăшса ĕçлекене хисеп туни вара малашне татах та тухăçлăрах вăй хума хавхалантарать. Эпĕ юрă-кĕвĕ ăстин тата вăл ертсе пыракан ансамбль çитĕнĕвĕсемпе, чыславĕпе паллашмасăр иртме пултараймарăм, анчах та вĕсен шутне тупаймарăм.

Унăн ĕçне тăсакансем – ачисем, вĕсем те юрă-ташă ăстисем. Улми йывăççинчен аякка ӳкмест тени кунта питĕ вырăнлă. Культура ĕçне упракансем, хаклакансем, тăван халăх йăли-йĕркине йăхран йăха куçаракансем ытларах пулсан чăвашлăх пĕтмест-ха. Несĕлсене сума сăвакансем вара мухтавлă.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Саламлатпăр**

Эпир хамăрăн хаклăран та хаклă, юратнăран та юратнă шăллăма – Малиновкăра пурăнакан **Викторин Александрович ВОЛКОВА** сумлă юбилейпе саламлатпăр. 60 çул тултарнă ятпа ăна юман пек çирĕп сывлăх, Атăл шывĕ пек вăрăм ĕмĕр, хĕвел пек ăшă пулма сунатпăр. Пире пурне те вăй çитнĕ таран пулăшнăшăн тав сăмахĕ калатпăр. Ачусемпе, мăнукусемпе савăнса пурăнмалла пултăр, вĕсен ырлăхне курмалла пултăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, виçĕ мăнукĕ, аппăшĕсем, пиччĕшĕ, шăллĕ, çывăх тăванĕсем, пускилсем.**

Кашмашра çуралса ӳснĕ, халĕ Муркашра пурăнакан **Любовь Германовна ЗАХАРОВĂНА** 60 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Сывлăху сан юман пек çирĕп пултăр, кун-çулу вăрăм та телейлĕ килтĕр, вăй-халу çăл куç пек тапса тăтăр, ачусемпе тата мăнукусемпе савăнса пурăнмалла пултăр.



Çемьере ялан татулăх,
Пурнăçу сан пултăр тулăх.
Çиçтĕр сăн-питре телей,
Савăк пултăр юбилей.

**Пысăк салампа Егоровсен çемйи.**

Поздравляем дорогую **КОННОВУ Татьяну Михайловну** с 55-летним юбилеем.



Пусть на пути и прекрасным, и длинным
День юбилея станет трамплинным
К новым высотам, победам, свершеньям,
К славным успехам и достиженьям!
Планы пусть полностью в жизнь воплотятся,
Все пожелания осуществятся.
С блеском решатся любые задачи!
Счастья, везенья, здоровья, удачи!

**С поздравлением одноклассники.**



Юратнă мăшăра, аннене, хунямана, асаннене, тăхлачăна – Ятман ялĕнче пурăнакан **Антонина Аркадьевна ИВАНОВĂНА** 60 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, телей, вăрăм кун-çул сунатпăр.

Ах, аннеçĕм, эпир сана юрататпăр,
Ах, аннеçĕм, санпа мухтанатпăр.
Ах, аннеçĕм, эс пурришĕн Турра тав тăватпăр,
Нумай-нумай çул пурăнма ырлăх-сывлăх сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, 4 ывăлĕпе кинĕсем, 7 мăнукĕ, хăти-тăхлачисем.**



Кашмашра пурăнакан юратнă мăшăра, аттене, юлташа, кĕрĕве, хаклă тăванăмăра – **Валерий Александрович СОЛОВЬЕВА** 50 çул тултарнă ятпа ырлăх-сывлăх, телей, ăнăçу сунса ăшшăн саламлатпăр. Кун-çул уттинче малашлăхпа çеç пурăннăран эсĕ пирĕншĕн ялан ырă тĕслĕхре. Пурнăç çулĕ çăмăл пулманнине эпир те паян сан пекех ăнланатпăр. Çавăнпа малашне канлĕ пурнăç, çирĕп сывлăх, телей те вăрăм ĕмĕр çеç сунатпăр.

**Салампа: мăшăрĕ, ачисем, хуняшшĕпе хунямăшĕ, юлташĕсем, Алжировсем, Григорьевсем, Николаевсем, Гавриловсем.**



Хисеплĕ те юратнă юлташа – Муркашра пурăнакан **Любовь Германовна ЗАХАРОВĂНА** декабрĕн 4-мĕшĕнче 60 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр.

Эпир сана çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, иксĕлми вăй-хал тата телей сунатпăр. Çĕр çинче мĕн пур ырри сана валли пултăр, чир-чĕр санран пăрăнса ирттĕр, кĕрекӳ яланах тулли пултăр. Кашни çĕнĕ кун сире телей кăна пиллетĕр, çӳрен çулăр яланах такăр та тумхахсăр пултăр, мĕн ĕмĕтленни пурнăçа кĕрсе пытăр.

**Саламлаканĕсем: Максимовсен, Лоцмановсен, Микряковсен, Николаевсен, Кирилловсен çемйисем тата Анжелика.**

**Прокуратурăран**

# Çынсен шухăшне шута илмен

Çатракасси ял тăрăхĕн администрацийĕн тĕп вырăнĕ – Çатракасси ялĕ, ку вăл чылайранпа çапла. Анчах та ăна халĕ çакăнта вăй хуракансем, должноçри ытти ĕçченсемпе канашламасăр, çынсен шухăш-кăмăлне шута илмесĕр, Кашмашри Культура çуртне куçарнă. Ĕçе çапла майпа харпăр хăй тĕллĕн йĕркелени вара чылайăшне пăлхантарнă.

Ял тăрăхĕн администрацине куçарассинче ку тăрăхра пурăнакансен шухăш-кăмăлĕ те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çапла вара ку ыйтăва уçăмлатма район прокуратуринчен пулăшу ыйтса çырупа тухнă. Тĕрĕслев иртнĕ май асăннă ял тăрăхĕн администрацине çӳлерех асăннă орган асăрхаттарнă. Халĕ вара Çатракасси ял тăрăхĕн администрацине Çатракасси ялне куçарас ĕç пырать.

# Çĕре пахалăхсăрлатнă

Район прокуратури Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Вăрманкасси ялĕнче пурăнакансен çырăвĕ тăрăх тĕрĕслев иртнĕ. «МРСК Волги – Чувашэнерго» ОАО филиалĕн производство уйрăмĕ асăннă ял тăрăхĕнче юсав ĕçĕсем иртнĕ. Йĕпе-сапаллă çанталăкра йывăр техника çынсем усă куракан ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕр лаптăкĕ урлă çӳренипе унта 45 сантиметр тарăнăш йĕрсем хăварнă. Çапла вара вĕсене палăрмалла пысăк сиен кӳнĕ.

Çак факт тĕлĕшпе асăннă организаци ячĕпе асăрхаттару тăратнă.

**П. МАКЕЕВ, прокурор пулăшуçи.**

Район 70 çул тултарнине халалласа

# Ăна Шурчасем манмаççĕ



***Кун-çулăн хăвăрт аталанăвĕнче иртнине пĕлмесĕр малашлăх çук тенине çулсем иртнĕçемĕн çеç чăнлăха илетпĕр. Хамăр пурнăçланă ырă ĕçсемех вăхăт иртнĕçемĕн пурнăç хумĕ айне пулса историе юлаççĕ. Чылайăшĕнче вара – паянхи ăнăçусен ырă никĕсĕ, малашлăх утăмĕсен тулăх вăрлăхĕ. Çакăн пек шухăшласа алла ручка илсе хаçат редакцине çыру çырма лартăм.***

Малашлăха шанса пурăннă ырă кăмăллă çыннăн çутă сăнарĕ, унăн кулленхи ĕçĕ-хĕлĕ, пархатарĕ нумай çул иртсен те ĕмĕрлĕхех халăх асĕнче юлать. Акă Шурча таврашĕнче хăй вăхăтĕнче ял хуçалăхне пĕтĕм чун-чĕрипе парăннă çын В. Соловьев пулнă. Василий Егорович пурăннă пулсан кăçал шăпах 80 çул тултармаллаччĕ. Ырă çын ĕмĕрĕ кĕске çав. 1980 çулхи авăн уйăхĕн 12-мĕшĕнче 47 çула кайнă ентешĕмĕрĕн пурнăçĕ йывăр чире пула вăхăтсăр татăлнă. Унăн вилĕмĕ нумайăшĕшĕн – çемйишĕн, сывăх тăванĕсемшĕн, «Герой» хуçалăх ĕçченĕсемшĕн, района ертсе пыракансемшĕн – пысăк çухату пулнă. Пурнăçран сăваплă, пархатарлă, çĕр ĕçне чунпа парăннă, малашлăха шанса пурăннă ăста ертӳçĕ ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайнă…

Унтанпа нумай шывшур юхса иртрĕ, анчах Шурча тăрăхĕ маттур ертӳçĕне манмасть, яланах асра тытать.

В. Соловьев 1933 çулхи раштавăн 5-мĕшĕнче ĕлĕкхилле Ишлей районне кĕрекен Шурча салинче нумай ачаллă хресчен çемйинче çуралнă. Ашшĕ Егор Яковлевич çĕр ĕçĕпе ĕçленĕ патвар хресчен, сĕтел-пукан ăсталакан алă ăсти пулнă. Амăшĕ Евдокия Николаевна – ял çыннисем хушшинче ĕçченлĕхĕпе те сăпайлăхĕпе палăрса тăнă хĕрарăм. Иккĕшĕ те тин кăна йĕркеленнĕ В. И. Чапаев ячĕпе хисепленекен колхозра ĕçленĕ. 1945 çулта амăшĕн пурнăçĕ йывăр чире пула вăхăтсăр татăлнă.

Василий çемьере 6-мĕш ача пулнă. Шăпа пӳрнипе 11 çултах тăлăха юлать вăл. Çемье лавне пĕччен туртма кансĕртен ашшĕ тепĕр хут авланать, анчах унăн пурнăçĕ те нумая пыман. Арçын ачан вара 6 çулхи йăмăкĕпе ама çури амăшĕпе пурăнма тивет. Хăйне çуратнă ашшĕ-амăшĕсĕр юлнăскерĕн ачаллах ĕçе кӳлĕнме тивет. Вăйă-кулăпа çитĕнменскер, хăйĕн пурнăç çулне уçма аслисенчен юлмасăр пайтах тар юхтарнă вăл.

1941–1948 çулсенче Шурчари çичĕ класлă шкултан вĕренсе тухнă арçын ача малашлăх ĕмĕтсемпе хăпартланса Муркашри вăтам шкула вĕренме каять. Анчах… Малалла вĕренме укçа пулман пирки Василий шкултан пăрахса тăван колхозра ĕçлеме пуçлать. Тăрăшуллă çамрăка аслисем кĕçех асăрхаççĕ те хайхискерне уй-хир бригадине ертсе пыма шанаççĕ. Çар ретне тăричченех вăй хурать вăл çак ĕçре, колхозниксем хушшинче ырă ята тивĕçет, ертӳçĕсем умĕнче шанăçа кĕрет.

Çарти виçĕ çул сисĕнмесĕрех иртет. Венгрире çар тивĕçне пурнăçланă каччă демобилизаци йĕркипе киле таврăнсан 1956 çулта Çĕрпӳри ял хуçалăх техникумне механизаци уйрăмне вĕренме кĕрет. Хăйĕн ĕç ĕмĕрне ял хуçалăхĕпе çыхăнтарма шухăш тытнă каччă тăватă çултан алла диплом илсе тăван ене таврăнать. Ятарлă пĕлӳ илнĕ каччă хуçалăха килнĕ çĕнĕ СК-1 «хир карапĕпе» ĕçлеме пуçлать. Хăй ĕçленĕ хушăрах вăл ял хуçалăхĕнче ĕçлеме шутланă арçынсене техникăпа тусласхтарма тытăнать. Çăмăл пулман вăл вăхăт, анчах ял хуçалăх малашлăхне шаннă каччăсемпе хĕрсем йывăрлăх умĕнче пуç усса ларман. Çакнашкал лару-тăрура хăйĕнпе пĕр шухăшлă хĕре Тамара Ивановнăна çураçса Василий Егорович çемье çавăрать. Туслă пурăнса вĕсем ывăлпа хĕр çуратса пурнăç панă. Килти нихăш ĕçрен те ютшăнман Тамара Ивановна малтан районта, унтан Шурчари почта уйрăмĕнче ĕçлесе «Ĕç ветеранĕ» ята тивĕçнĕ.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсем вĕçĕнче тата 60-мĕш çулĕсен пуçламăшĕнче, Муркаш районне унталла-кунталла турткаланă вăхăтра, В. Соловьев Шурчара вырнаçнă подстанцире ĕçлет (1962 – 1964 çулсем). Кунта та ответлăха туйнипе палăрать.

1961 çулта колхозсене пĕрлештерсе пысăклатас юхăм вăй илсен ку енри ялсенчи «Герой», «Правда», К. Маркс ячĕллĕ колхозсем пĕрлешсе К. Маркс ячĕллĕ пĕрлешӳллĕ хуçалăх туса хунă. Ăна ертсе пыма колхозниксем К. Енисеева çирĕплетнĕ. Вăхăт иртнĕ май Шурча тăрăхĕсем пĕрле ĕçлеме килĕшменнипе 1965 çулта уйрăм хуçалăха уйрăлса тухаççĕ. Хăйсен колхозне йĕркелӳ пухăвĕнче колхозниксем пĕр саслăн пулса В. Соловьева ертсе пыма шанаççĕ.

Çĕнĕ председательшĕн пĕтĕм йывăрлăх пĕр самантра куç умне тухса тăнă. Çĕньял Шурчари тĕкĕ çинче тытăнса тăракан ĕне ферми, ăçта ан пăх – кивĕ йывăç çуртсем, колхоз укçа-тенкĕрен пач татăк пулни т. ыт. те. Хуçалăхăн банкри счетне уçма 200 Н. Тимофеевран тенкĕ укçа кивçен илсе В. Соловьев ĕçе пуçăнать: ял çыннисем шанаççĕ пулсан – ĕçлемелле.

Чăн малтан вăл ĕç дисциплинине çирĕплетет, хуçалăхăн кивелнĕ йывăç çурчĕсене юсаттарать. Ял варринчи тахçан хупăннă чиркĕве те юхăнса ларма памасть: çи виттине юсаса витсе, хутса ăшăтмалли пăрăхсем хурса ял хуçалăх техники юсамалли мастерской уçать.

**(Вĕçĕ çитес номерте).**

**С. ТИМОФЕЕВА хатĕрленĕ.**

Шурча сали.

# Ытларах пулăшар

Инвалидсен канашлăвĕ

Пирĕн çарсене Демократиллĕ Афганистан Республикинчен кăларнăранпа çитес çулхи нарăс уйăхĕнче 25 çул çитет. Çавна хатĕрленсе вырăнсенче ĕçсем паянах анлă сарăлса пыраççĕ.

Иртнĕ шăмат кун, чӳк уйăхĕн 30-мĕшĕнче, Афганистан вăрçине тата ытти çар хирĕç тăрăвĕсене хутшăнса вăрçă инваличĕсем пулнисен Раççейри обществăлла организацийĕн Чăваш Республикинчи организацийĕ хăй йĕркеленнĕренпе 12 çул çитнине Шупашкарти ачасемпе çамрăксен пултарулăх керменĕнче паллă турĕ. Çак мероприятирен Муркашсем те айккинче юлмарĕç.



– Афганистанра çур çул службăра тăнă хыççăн пĕррехинче пĕр çапăçура 150 салтакран тăракан ротăран çурри çапăçу хирне выртса юлни (73 салтак вилнĕччĕ тата иккĕн аманнăччĕ) паян та асран тухмасть. Пурте çамрăк, пурăнмалла та пурăнмалла, анчах… «Хура тюльпансем» Тăван çĕр-шывалла вĕçнине пăхма-сăнама питех те хурлăхлăччĕ. Ара, тантăшсем вĕт, ĕнер пĕрле чей ĕçнĕ юлташсем. Чылайăшĕ хĕр тутине те курман, – аса илтĕм мотострелоксен 66-мĕш уйрăм бригадинчи отделени командирĕн Н. Перов кĕçĕн сержантăн сăмахĕсене.

Çĕр-шыв интересĕсене инçетри сăртлă-туллă вырăнсенче хӳтĕлесе инвалид пулса тăнисем, приказ пурнăçласа вăрçă кĕрлемен çĕрте те сывлăха çухатнисем паян пирĕнтен куллен тимлĕх кĕтеççĕ. Раççейре интернационалист салтаксем пирки манманни вĕсене те, вĕсен тăванĕсене те пурнăçра хавхалантарать кăна.

– Кунта пирĕн хамăрăн çирĕпрех пулмалла. Сывлăха çухатнисен паян та пĕр çыхăра пулса çапăçу хирĕнчи пек пĕрне-пĕри упрассишĕн тăрăшмалла. Эпир çакна тума пултарсан çеç пирĕн çине тимлĕрех пăхма пуçлĕç, – терĕ уявра асăннă обществăн председателĕ Г. Матвеев.

Çулсем пĕр шелсĕр малалла иртеççĕ. Анчах иртнине манни ыранхи кунпа пурăнманниех пулать. Çакна асра тытса «афганецсем» хăйсен общество пурнăçне самантлăха та пĕчченлĕхре хăвармаççĕ.

Обществăн çуралнă кунне паллă тума çак кун Муркашран К. Петров, В. Яндимиркин, В. Семенов, Р. Иванов, И. Колесников, А. Паргеев, И. Паргеев, С. Андреев, Г. Соловьев, В. Грачев, А. Чакак, Е. Чернов **(сăн ӳкерчĕкре)** хутшăнчĕç. Вĕсем хăйсен сăмахĕнче çĕр-шыв историйĕ унăн çар пурнăçĕпе тачă çыхăннине, вăл вара Раççей халăхĕн мухтавлă енĕ пулнине палăртрĕç.

**А. БЕЛОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

Официально

**ПРОТОКОЛ № 1**
**публичных слушаний по вопросу утверждения проектов планировки территорий, примыкающих к д.Чурикасы Кадикасинского сельского поселения с восточной стороны и к д. Кадикасы Кадикасинского сельского поселения с северной стороны**

Дата проведения: 27.11.2013г.

Время проведения: 13.00.

Место проведения: здание администрации Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики: Моргаушский район, д. Кораккасы

Председатель: Лебедев Г.Г. – глава Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики

Присутствовало: 11 человек.

**Лебедев Г.Г.** – На повестке дня вопрос утверждения проектов планировки территорий, примыкающих к д.Чурикасы Кадикасинского сельского поселения с восточной стороны и к д. Кадикасы Кадикасинского сельского поселения с северной стороны.

Администрация города Чебоксары в рамках реализации закона Чувашской Республики от 01.04.2011 №10 «О предоставлении земельных участков многодетным семьям в Чувашской Республике» столкнулась с проблемой нехватки свободных земельных участков для распределения многодетным семьям города Чебоксары.

Между администрацией города Чебоксары и администрацией Моргаушского района Чувашской Республики в 2012 году подписано Соглашение о передаче в муниципальную собственность города Чебоксары земельных участков в рамках государственной поддержки многодетных семей. Постановлением главы Моргаушской районной администрации от 29.12.2012 № 1174 безвозмездно переданы в собственность города Чебоксары 2 земельных участка общей площадью 24,5 га, на них зарегистрировано право муниципальной собственности города Чебоксары.

Решением Собрания депутатов Кадикасинского сельского поселения от 15.05.2013г данные участки вошли в границы населенных пунктов, входящих в состав Кадикасинского сельского поселения.

В отношении земельного участка общей площадью более 118 га, находящегося в государственной собственности Чувашской Республики, расположенного на территории Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района и примыкающий с северной стороны к д.Кадикасы Кабинетом Министров Чувашской Республики принято решение о передаче их городу Чебоксары и Моргаушскому району в собственность для их предоставления многодетным семьям, проживающим в муниципальных образованиях Моргаушского района, г.Чебоксары и под строительство индивидуальных жилых домов.

**Шевлягин А.А.** – начальник отдела архитектуры и градостроительства управления архитектуры и градостроительства администрации города Чебоксары – главный архитектор города Чебоксары. Законом Чувашской Республики от 01.04.2011 №10 предусмотрено предоставление земельных участков бесплатно многодетным семьям Чувашской Республики для индивидуального жилищного строительства, ведения личного подсобного хозяйства и под дачное строительство. В соответствии с представленным проектом планировки территории, примыкающей к д.Чурикасы Кадикасинского сельского поселения с восточной стороны, на данной территории площадью 24,5 га предусматривается строительство 290 индивидуальных жилых домов на приусадебных участках площадью по 5,74 соток каждый. Кроме того, проектом предлагается строительство аптеки, магазинов, предприятия бытового обслуживания, административного здания, спортивных и игровых площадок. Строительство дошкольных и образовательных учреждений на данной территории не предусматривается. Для обеспечения инженерной инфраструктурой данной жилой группы проектом предусматривается прокладка газопровода от существующей ГРП, линий электропередач от существующей ТП, водопроводных сетей, строительство водонапорной башни, сетей канализации и очистных сооружений, а также устройство асфальтированных автодорог.

**Татур Г.А.** – руководитель проектной организации.

Проектом планировки территории, примыкающей к д. Кадикасы Кадикасинского сельского поселения с северной стороны предусмотрено размещение на данной территории: малоэтажных жилых домов до 3-х этажей 22 блок-секций; индивидуальных жилых домов – 746; 2 детских сада, каждый на 280 мест; школы на 1200 мест; магазина товаров повседневного спроса; объектов общественного питания; рыночного комплекса; торгового центра; фельдшерско-акушерского пункта; пожарного депо; административно-бытового учреждения; автостанции; встроенного нежилого помещения (банки, аптеки, офисы и т.д.).

**Юхтанов С.В.** – депутат Кадикасинского сельского поселения. В целом не возражаем в утверждении проектов планировки территорий возле д. Чурикасы и д. Кадикасы. Данные участки будут развиваться, пустующие территории будут застраиваться. Я призываю утвердить представленные проекты планировки территорий.

**Лебедев Г.Г.** – Иные замечания и предложения по рассматриваемому вопросу имеются? Если таковых нет, то подведем итоги проделанной работы.

В результате рассмотрения материалов публичных слушаний установлено следующее: порядок и процедура публичных слушаний соблюдены согласно Уставу Кадикасинского сельского поселения.

Публичные слушания по вопросу утверждения проектов планировки территорий, примыкающих к д.Чурикасы Кадикасинского сельского поселения с восточной стороны и к д. Кадикасы Кадикасинского сельского поселения с северной стороны, считать состоявшимися.

**Председатель комиссии по публичным слушаниям Г.Г. Лебедев.**

**ЗАКЛЮЧЕНИЕ**
**о результатах публичных слушаний по проектам планировки территорий, примыкающих к д.Чурикасы Кадикасинского сельского поселения с восточной стороны и к д. Кадикасы Кадикасинского сельского поселения с северной стороны**

27.11.2013 г.

**Организатор публичных слушаний:** Глава Кадикасинского сельского поселения.

**Дата, место проведения публичных слушаний:**

27.11.2013, 13.00, здание администрации Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики: Моргаушский район, д. Кораккасы.

**Председательствующий:** Лебедев Г.Г. – глава Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.

В публичных слушаниях принимали участие: депутаты Кадикасинского сельского поселения, жители Кадикасинского сельского поселения, представители администрации города Чебоксары и проектной организации.

В результате рассмотрения материалов указанных публичных слушаний установлено следующее:

Порядок и процедура публичных слушаний соблюдены согласно Уставу Кадикасинского сельского поселения.

На данных публичных слушаниях предложения и замечания не поступали.

Вывод:

1. Публичные слушания по вопросу утверждения проектов планировки территорий, примыкающих к д.Чурикасы Кадикасинского сельского поселения с восточной стороны и к д. Кадикасы Кадикасинского сельского поселения с северной стороны, считать состоявшимися.

2. Рекомендовать главе администрации Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики утвердить проекты планировки территорий, примыкающих к д.Чурикасы Кадикасинского сельского поселения с восточной стороны и к д. Кадикасы Кадикасинского сельского поселения с северной стороны.

**Председатель комиссии по публичным слушаниям Г.Г. Лебедев.**

# Пăр çине кĕме ан васкăр

**Асăрхаттару**

Хĕл ларакан тапхăрта пăр çирĕп шăнса çитейместха, çавăнпа та пăрланнă пĕве те хăрушлăх кӳрет.

Пăр мĕн хулăнăшне унăн тĕсне кура пĕлме пулать. Хулăнни кăвакрах е симĕсрех тĕслĕ. Енчен те çиелтен пăхсан пăр шурă е шупка сарăрах пулсан ун çине ура ярса пусма юрамасть. Чи çинçе пăр, паллах, юр хӳсе лартнă вырăнта, хăмăш хушшинче тата шывра ӳсекен курăк курăннă çĕрте пулать.

Тăрук пăр айне пултăр пулсан çухалса ан кайăр. Алăсене сарса пăр хĕрринчен тытăнса пуçпа шыв айне пулас мар тесе тăрăшмалла. Пăр çийĕнче мĕн чухлĕ нумайрах вырăн йышăнатăр, çавăн чухлĕ лайăхрах. Вакка ытлашши сарса ярасран та асăрханăр. Хăвăра урасемпе пулăшса хытă пăр çине тухма тăрăшăр.

Вакăран тухма пултарсассăн тӳрех хăвăр ăçтан килнĕ çав еннелле упаленсе кайăр. Çыран хĕрринче кăпăшка юр шыраса ун ăшне чăмăр. Типĕ юр сирĕн тумтирти ытлашши шыва сăрхăнтарĕ. Çапах та йĕпе çипуça часрах улăштарма е типĕтме тăрăшăр.

Сирĕн куç умĕнчех кам та пулин шыва каять пулсан ăна малтанах пулăшу çитессе шантарăр. Путакан патне урасене сарса, хырăм çинче шуса çеç пыма юрать. Алă айĕнче йĕлтĕр пулсан йĕлтĕре е йĕлтĕр туйине путакана тăсса парăр. Вакă хĕрне çывхарма юрамасть! Шыва кайнă çынпа ăна пулăшакан пĕр-пĕринчен 3–4 метртан сахал мар хушăра пулмалла. Çавăнпа та шарф, пиçиххи е çакна майлă урăх япалан пĕр вĕçне путакана ывăтса памалла.

Çакна асра тытмалла: хĕллехи кун пулла кайсассăн пĕр тĕлтех темиçе вакă ан шăтарăр, пĕр вырăнта нумаййăн ан пухăнăр. Кашни пулăçăнах çумра 12–15 метр тăршшĕ вĕрен пулмалла. Вĕренĕн пĕр вĕçне 400-500 грамм йывăрăш хатĕр çакмалла, тепĕр вĕçне алла тăхăнтартмалли тĕвĕ тумалла.

Конькипе ярăнас текенсем валли те ятарлă вырăнсем пулмалла. Малтанах çырмари пăр мĕн хулăнăшне тимлĕн виçмелле, тишкермелле, кайран çеç конькипе ярăнма ирĕк памалла. Пăр хулăнăшĕ кун пек чухне 12 сантиметртан çӳхе мар, ярăнакансем нумай пулсан 25 сантиметртан çӳхе мар пулмалла.

# Таса Хĕр Марияна чиркĕве леçни

**Православи кĕтесĕ**

Декабрĕн 4-мĕшĕнче Таса Чиркӳ Турă Амăшне чиркĕве леçнине асăнать. Çакна асăнса тăвакан праçник ак епле пулнă.

Галилея çĕрĕнчи Назарет хулинче арлă-арăмлă Иоакимпа Анна пурăннă. Вĕсем Турра юрăхлă, таса, сăваплă çынсем пулнă. Вĕсене пĕр пысăк хуйхă – хăйсен ача çукки пит хурлантарнă. Ватăлнă пулсан та вĕсем Турра шанма пăрахмасăр тархасласа кĕлтунă. «Пирĕн кĕлле илтсе, Турă пире ача курмалла тусан, эпир ăна Турра Хăйнех парăттăмăр», – тесе сăмах панă. Вĕсем таса пурăннине, хуйха ӳпкелемесĕр тӳснине кура Турă çав ватăсене ырăлăх кăтартнă – вĕсен хĕр ача çуралнă, ăна Мария ятлă хунă.

Таса Хĕр Мария виçĕ çул тултарсан унăн ашшĕ-амăшĕ Турă умĕнче панă сăмаха тытма шутланă. Вĕсем хăйсем патне тăванĕсене пуçтарнă, унтан хĕрне чи аван тумтир тăхăнтартнă та кĕлĕ юррисем юрласа чиркĕве илсе кайнă. Марияна ăсатма ытти çынсем те пынă. Захария ятлă аслă священник таса Хĕр Марияна чиркӳ алăкĕ умне хирĕç тухса пилленĕ. Святой Сывлăш систернипе, Захария Таса Хĕре чиркĕвĕн тасаран та таса пӳлĕмне илсе кĕнĕ. Вăл пӳлĕме аслă священник хăй те çулталăкне пĕрре анчах кĕнĕ. Иоакимпа Анна хăйсен асăннă ĕçне туса пĕтерсен киле таврăннă, таса Хĕр Мария чиркӳре юлнă. Мария унта 14 çула çитиччен Турра кĕлтуса, Турă кĕнекисене вуласа, алă ĕçĕ туса пурăннă.

Пире те Турă кашнине ача-пăча панă, кашнин пирĕн ывăл-хĕр пур. Анчах эпир вĕсене Турра паратпăр-ши? Пирĕн ачасем Турра юрăхлă пулса ӳсчĕр тесен ачасене пĕчĕккĕллех кĕлĕ сăмахĕсем вĕрентме тăрăшас пулать тата Турра юратса, Ăна хисеплесе, унтан хăраса пурăнма вĕрентес пулать. Пуринчен ытла вĕсене чиркĕве çӳреме вĕрентмелле. Чиркĕве çӳрекен çын Турăран уйрăлмасть, Турă патне каймалли астусах тăрать. Çавăн пек ӳстернĕ ача ырă çын пулать, ашшĕ-амăшне хисеплет, вилсен те вĕсемшĕн Турра кĕлтăвать, Турă умĕнче сăваплă çын шутланать.

**Йӳçкассинчи чиркӳ настоятелĕ Сергий атте.**

**Спортри çитĕнӳсем**

# Малтисен йышĕнче

Хăвăрт утассипе Чăваш Ен Кубокĕн кăçалхи юлашки – тăваттăмĕш тапхăрĕ вĕçленчĕ. В. Егорова ячĕллĕ Олимп резервĕсен ачасемпе çамрăксен 1 номерлĕ ятарлă шкулĕн Муркашри филиалĕн тата районти ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ – «Сывлăх» ФСК воспитанникĕсем унта хутшăнса аван кăтартусемпе савăнтарчĕç. Иртнĕ канмалли кунсенче Çĕнĕ Шупашкарта иртнĕ ăмăртăва В. Киселев, С. Васильев, Р. Григорьев тата В. Моисеев тренерсем патĕнче ăсталăха туптакансем хутшăнчĕç.

2000 çулта тата кĕçĕнреххисен ӳсĕмĕнче Роман Куликов, Александра Вострейкина,1998–1999 çулсенче çуралнисен ӳсĕмĕнче Роман Юсупов 1-мĕш вырăнсем йышăнма пултарнă.

Пур тăвату тапхăра пĕтĕмлетнĕ хыççăнхи кăтартусемпе Сергей Белов, Лилия Степанова, Станислав Николаев 2-мĕш вырăнсем йышăнни паллă. Александра Вострейкина вара Кубок çĕнтерӳçи ятне тивĕçнĕ.

В. Киселев тренер пĕлтернĕ тăрăх çитес çулхи Чăваш Ен Кубокĕччен вăхăт нумаях юлмасть. Вăл февральте пуçланать. Апла çамрăк спортсменсене лайăхрах кăтартусем тума вăйхалпа тӳсĕмлĕх сунатпăр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**


имидж оптика
сеть оптических салонов
скидка 10%
Предъявителю объявления

Уважаемые жители с. Моргауши и Моргаушского района

ПРИГЛАШАЕМ БЕСПЛАТНО ПРОВЕРИТЬ ЗРЕНИЕ И ЗАКАЗАТЬ ОЧКИ

5 декабря с 9.00 до 17.00 в ФСК “Сывлăх” по адресу: с. Моргауши, ул. Мира, 8

Телефон для справок: 8 961 344 41 44

Лицензия №ФС-99-03-002797 от 11.04.12г. выдана Федеральной службой по надзору в сфере здравоохранения и социального развития





займы
• на покупку и строительство жилья с использованием материнского капитала

АКЦИЯ

% СТАВКИ СНИЖЕНЫ до 31 января 2014 года

Кредитный потребительский кооператив “Содружество”
с.Моргауши, ул.50 лет Октября, 23
62-6-86, 8 900 333 0001

для пайщиков кооператива



Консалтинговая компания «ВИКТОРИЯ»
* Представительство в судах по всем видам споров;
* Регистрация, ликвидация организаций, ИП;
* Подготовка исков, составление договоров;
* Сопровождение сделок с недвижимостью, в.т.ч. земельными участками: оформление в собственность, в аренду, регистрация;
* Взыскание по КАСКО и ОСАГО, дела по ДТП;
*Услуги по оценке имущества;
* Бухгалтерский и кадровый учет.
Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д.6, офис 119.
Тел.: 62-4-43. сот. 8-903-358-84-64.
г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4 а. Тел.: 44-64-48.
E-mai:l vika09-2010@mail.ru, сайт: www.victoria-ooo.ru


**Прогноз погоды**

| | среда 4 декабря | | | | четверг 5 декабря | | | | пятница 6 декабря | | | | суббота 7 декабря | | | | воскресенье 8 декабря | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | -10 | -6 | 0 | 0 | 0 | -2 | -1 | -1 | -1 | -4 | -3 | -4 | -1 | -2 | 0 | 0 | -2 | -5 | -3 |
| Давление мм | 743 | 740 | 738 | 737 | 735 | 733 | 731 | 728 | 727 | 727 | 731 | 733 | 734 | 735 | 736 | 734 | 738 | 742 | 744 |
| Влажность % | 87 | 91 | 94 | 92 | 98 | 97 | 93 | 94 | 93 | 91 | 87 | 91 | 93 | 95 | 93 | 94 | 93 | 90 | 87 |
| Ветер м/сек | 5 | 5 | 5 | 3 | 5 | 4 | 5 | 5 | 7 | 7 | 7 | 3 | 7 | 6 | 3 | 6 | 7 | 3 | 3 |
| | Ю-З | Ю-З | З | З | Ю-З | Ю | Ю | Ю | Ю-З | Ю-З | З | Ю-З | Ю-З | Ю | Ю | Ю | З | Ю | Ю |
| Солнце восход / заход | | 09:05 | 16:21 | | | 09:06 | 16:20 | | | 09:07 | 16:20 | | | 09:09 | 16:19 | | | 09:10 | 16:19 |
| Луна восход / заход | | 10:04 | 18:14 | | | 10:54 | 19:31 | | | 11:33 | 20:53 | | | 12:03 | 22:16 | | | 12:29 | 23:37 |

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Цифровое спутниковое телевидение ТРИКОЛОР - 7000 руб. ТЕЛЕКАРТА - 3000 руб. Гарантия. Тел.: 8-905-345-77-19. 5-10.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 2-10.**

**Спутниковое цифровое телевидение ТРИКОЛОР 200 каналов – 7500 руб. ТЕЛЕКАРТА 50 каналов – 3500 руб. 1-10. Дилер, установщик по району. Тел.: 8-906-385-29-30.**

**ПИЛОМАТЕРИАЛЫ ОБРЕЗНЫЕ ВСЕХ РАЗМЕРОВ. Тел.: 8-903-346-40-58, 8-905-346-63-36. 1-10.**

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ Тел.: 8-927-667-40-92. 26-33.**

**В с. Моргауши открылся новый магазин «ОДЕЖДА»: женская, мужская, детская одежда, обувь, куртки, джинсы, сумки, нижнее белье и много другое. Очень низкие цены. Адрес: с. Моргауши, напротив магазина «Визит». Тел.: 8-917-077-77-89. 2-3.**

**Предновогодние скидки на мед цветочный, урожай 2013 года, цена – 250 руб. Тел.: 8-908-309-66-75. 3-10.**

* * *

**Бурение индивидуальных колодцев и скважин. Кольца колодцев ж/б (замковые, простые) D-0.7;1.0;1.5, крышки днища. Доставка. Установка. Тел.: 8-902-327-82-52. 6-12.**

* * *

**Рулонти кăçалхи утă сутатăп. Ярославка ялĕ. Тел.: 8-937-399-68-85.**

* * *

**Продаются березовые дрова 5 м$^3$. Тел.: 8-903-065-58-68. 2-3.**

**В связи с открытием АЗС требуются операторы и заправщики. Официальное трудоустройство. Достойная заработная плата. Тел.: 8(83541)69-8-11. 3-3.**

* * *

**Бурение колодцев, отверстий. Колодезные кольца. Доставка. Установка. Тел.: 8-927-668-96-96. 3-6.**

* * *

**ЗАО «МСО «Моргаушская» требуется бригада каменщиков. Обращаться по тел.: 69-7-23, 69-8-59. 2-3.**

* * *

**Продается железный киоск (2м.х4м.) на рынке с. Моргауши. Тел.: 8-906-131-36-39.**

* * *

**Мартăн 12-мĕшĕнче пăруламалли хĕрлĕ-сарă тынашки тата сурăхпа 3 уйăхри путеккине сутатпăр. Тел.: 8-961-340-21-35.**

* * *

**Требуются рабочие на производство мебели, зарплата сдельная, своевременная. Тел.: 8-903-065-50-40, 8-905-343-08-23. 2-2.**

* * *

**Продается автомашина УАЗ-бортовой, 1997 года выпуска, на ходу. Тел.: 8-927-858-70-74.**

* * *

**ООО Агрофирма «Путь Ильича» реализует бычков 1–1,5 месячных. 1 кг живого веса – 160 руб. Обращаться по тел.: 62-4-11. 1-2.**

* * *

**Продается однокомнатная квартира площадью 43 кв. м. в д. Москакасы (новый дом). Тел.: 8-903-066-78-12.**

* * *

**Продаю трехкомнатную квартиру в с. Моргауши. Имеется гараж, сарай и подвальное помещение. Тел.: 8-903-358-16-56.**

* * *

**Продаю автомашину ГАЗ-53-Б самосвал, 1979 года выпуска, в хорошем рабочем состоянии, двигатель после ремонта, аккумулятор новый. Цена договорная. Тел.: 8-960-304-28-68.**

* * *

**Сдаю в аренду помещение под магазин или под парикмахерскую, площадью 20 м$^2$ на территории МУП «Рынок «Моргаушский», вход отдельный. Тел.: 8-905-340-23-60. 1-2.**

* * *

**Моргаушскому райпо требуются повара. Тел.: 62-5-90, 8-937-956-43-40. 1-2.**

* * *

**Продажа годовалых телок (красные). Тел.: 8-905-028-53-25, 8-906-384-82-66.**

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:101601:780, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Садовникова Татьяна Константиновна, Чувашская Республика, Моргаушский район, Оринкинское сельское поселение, д. Адабай, ул. Адабайская, д. 28.

Проект межевания земельного участка подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:101601:780. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Оринкинское сельское поселение.

С проектом межевания земельного участка можно ознакомиться по адресу: 429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельного участка принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д. 37.


Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви

ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хай тытăмлă учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Николаева Н.Н.
Пичете панă 03.12.2013 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4810.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.